# Ной тата пĕтĕм çĕре шыв илни



Çыравçи: Edward Hughes
Иллюстрацилекенĕ: Byron Unger; Lazarus
Alastair Paterson
Куçаруçи: www.christian-translation.com
Адаптацилекенĕ: M. Maillot; Tammy S.

Утмăлăшĕнчен виççĕмĕш халапĕ

**M1914.org**

**Bible for Children, PO Box 3, Winnipeg MB  R3C 2G1  Canada**

Лицензи: сутса яриччен сирĕн çак халапа копилесе
илме е пичетлеме ирĕк пур.

Ной Турра пуççапакан çын пулнă.  Ыттисем пурте Турра курайман тата ăна итлемен.



1

Пĕррехинче Турă аптраттарса ÿкерекен сăмахсем каланă. “Эпĕ çак йĕркесĕр тĕнчене пĕтерĕп, - тенĕ Турă Ноя.  - Санăн çемйÿ çеç çăлăнса юлĕ”.



2

Ной тата пĕтĕм çĕре шыв илни

Турă Сăмахĕнчи, Библири, халап

ра вырнаçнă

Пултарни 6-10

“Сирĕн Сăмахăрсен алăкĕ çутă парать.”
Псалом 119:130

19

20

21

22

23

Эпир япăх ĕçсем тунине турă пĕлет.
Çылăхшăн наказани-вилĕм.

Турă пире питĕ хытă юратнăран Хăйĕн Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата пире наказани пама янă.  Иисус чĕрĕлнĕ те Пĕлĕте таврăннă!  Халĕ Турă пирĕн çылăхсене каçарма пултарать.

Эсир хăвăр çылăхăрсенчен пăрăнасшăн пулсан, çакна Турра калăр: Хаклă Турă, Иисус маншăн вилнине тата халĕ каллех пурăннине эпĕ ĕненетĕп. Тархасшăн, ман пурнăçа кĕр те манăн çылăхсене каçар: эпĕ çĕнĕ пурнăçпа пурăнам, кайран Вара ĕмĕрлĕхех Санпа пĕрле пулам.  Хăвăн ача пек пурăнма пулăшсам мана.  Аминь.   Иоанн 3:16

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр!

Chuvash


Турӑ Ноя пӗтӗм ҫӗре шыв илесси пирки асӑрхаттарнӑ. “Хӑвӑн ҫемйӳ валли тата нумай чӗр чуна вырнаҫтарма ҫителӗклӗ йывӑҫ ковчег, пысӑк кимӗ, ту”, - тесе хушнӑ Ноя. Турӑ Ноя тӗрӗс хушусем панӑ. Ной ӗҫе тытӑннӑ!
3
Ной мӗншӗн ковчег тунине ӑнлантарса панӑ чухне ҫынсем унран кулнӑ ҫеҫ.
Ной чарӑнман. Вӑл ҫынсене Турӑ ҫинчен те каласа панӑ. Анчах ӑна никам та итлемен.
4
Нойӑн ҫирӗп ӗненӳ пулнӑ. Ҫумӑр унччен нихӑҫан та пулман пулин те, вӑл Турра ӗненнӗ. Кӗҫех ковчег хатӗр пулнӑ.
5
Унтан чӗр чунсем те ҫитнӗ. Турӑ ҫичӗ тӗрлӗ чӗр чӳн, унтан тата икӗ тӗрли илсе килнӗ. Кайӑк-кӗшӗкӗ, тискер кайӑкӗсем пысӑкки те пӗчӗкки пурте ковчег патнелле туртӑннӑ.
6
Тен, ҫынсем Ной чӗрчунсене тиенӗ чухне мӑшкӑлласа кулнӑ та. Вӗсем Турра хирӗҫ ҫылӑх тума пӑрахман. Вӗсем ковчега кӗме ыйтман та.
7
Ҫапла карап ҫине пур чӗрчунпа кайӑк-кӗшӗк та пырса кӗнӗ. “Ковчега кӗр”, - тенӗ Ноя Турӑ. “- Эсӗ те, санӑн ҫемйӳ те”. Ной, унӑн арӑмӗ, унӑн виҫӗ ывӑлӗ тата вӗсен арӑмӗсем ковчега кӗнӗ. Вара Турӑ алӑка хупнӑ!
8
Унтан ҫумӑр ҫума пуҫланӑ. Вӑйлӑ ҫумӑр ҫӗре хӗрӗх кун та хӗрӗх каҫ пӗр чарӑнмасӑр йепетнӗ.
9
Шыв хуласемпе ялсене тултарнӑ. Ҫумӑр чарӑнсан тусем те шыв айне путнӑ. Сывлӑшпа сывлакансем пурте вилнӗ.
10
Шыв хӑпарсан, ковчег ҫӳлелле ишсе тухнӑ. Тен, шалта тӗттӗм пулнӑ, тен, тирпейсӗр те, тен, хӑрушӑ та пулнӑ пулӗ. Анчах та ковчег Ноя шыв илесрен хӳтӗленӗ.
11
Пилӗк уйӑхран Турӑ типӗтекен ҫил янӑ. Ковчег майӗпен Арарат ҫуллӗ тӑвӗ ҫинче чарӑнса тӑнӑ. Ной шыв чакиччен шалта тата хӗрӗх кун кӗтнӗ.
12
Ной ковчегӑн уҫӑ чӳречинчен ула куракпа кӑвакарчӑна янӑ. Канма типӗ вырӑн тупайманнипе кӑвакарчӑн Ной патне таврӑннӑ.
13
Тепӗр эрнерен Ной тепӗр хут хӑтланса пӑхнӑ. Кӑвакарчӑн хӑйӗн сӑмсинче ешӗл олива ҫулҫи илсе килчӗ. Тепӗр эрнере Ной ҫӗр типсе ларнине пӗлнӗ, мӗншӗн тесен кӑвакарчӑн таврӑнман.
14
Турӑ Ноя ковчегран тухма вӑхӑт ҫитнӗ тесе каланӑ. Нойпа унӑн ҫемйи чӗрчунсене кӑларнӑ.
15
Ной ҫав тери сӑваплӑ пулнӑ! ӑна та, унӑн ҫемйине те шыв илнинчен ҫӑлса хӑварнӑшӑн вӑл Турра тав туса алтарь тунӑ та пуҫҫапнӑ.
16
Турӑ Ноя ҫирӗп сӑмах панӑ. Этеме ҫылӑхӗсемшӗн суд тумашкӑн Вӑл урӑх нихӑҫан та пӗтӗм ҫӗре шыв ямӗ.
Турӑ хӑйӗн сӑмахне яланах асра тытнӑ. Асамат кӗперӗ турӑ сӑмах панине пӗлтернӗ.
17
Нойпа унӑн ҫемйи ҫӗре шыв илнӗ хыҫҫӑн ҫӗнӗ пурнӑҫ тума тытӑннӑ. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн унӑн тӑхӑмӗ ҫӗнӗрен пӗтӗм ҫӗре вырӑнаҫса тултарнӑ. Тӗнчери пур халӑх та
Нойпа унӑн ачисенчен ҫуралнӑ.
18